Агробизнес çĕннине алла илет

# Бизнес-инкубатор: мĕн вăл, камшăн, тĕллевĕ епле?

*Юлашки çулсенче çĕр-шыв ертӳçисем ял хуçалăхĕ çине тимлĕрех пăхма тытăнни пур енлĕн те курăнать темелле. Ял вăранчĕ: çĕнĕ технологипе хĕç-пăшалланнă хресчен тыр-пул тата выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ туса илессипе ӳсĕмлĕрех ĕçлеме пуçларĕ. Çакнашкал лару-тăрура пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе пĕрлех хресчен (фермер) хуçалăхĕсем те ура çине тăма пуçлани курăнать. Анчах экономика анлăшĕнче çĕннине вăй илме час-часах çăмăл мар. Ăçтан кĕтмелле пулăшу? Ку ыйту вуншар-çĕршер çĕр ĕçченне шухăшлаттарнă, шухăшлаттарать те. Хамăра хамăр алă тăсса памасан, эпир камшăн пĕлтерĕшлĕрех-ши? Çакна ăнланса ăна валли юлашки çулсенче çĕр-шыв правительстви тĕрлĕ саккунсем йышăнса çĕр ĕçченне тупăшлă аталану çулне ытларах та ытларах уçса парать. Акă Чăваш Республикин Президенчĕ те 2009 çула Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕ тесе йышăнчĕ. Хресченĕн çăмăл мар пурнăçне çĕнĕ улшăнусем илсе килĕ-и вăл? Ку пĕтĕмпех хамăртан килет. Паянхи пирĕн калаçу шăпах çак çул çинчи пулăшуçăсенчен пĕринпе. Редакци хăни – «Районăн бизнес-инкубаторĕ» ертсе пыракан компанин директорĕ Евгений Николаевич СУББОТИН.*

**– Евгений Николаевич, районти пĕчĕк тата вăтам бизнесшăн эсир ют çын мар. Район анлăшĕнчи çак пысăк та çĕнĕ ĕçе пуçарса яма сире мĕн хистерĕ?**

– Çапла, юлашки çулсенче «Муркаш пасарĕ» предприятие ертсе пынă май бизнес ыйтăвĕсемпе тăтăшах тĕл пулма тиврĕ. Пĕрремĕш кун мар ĕнтĕ районти бизнесăн ырă тата çителĕксĕр енĕсем куç умĕнче пулса иртеççĕ. Уйрăмах агробизнес уксахлани чуна ыраттаратчĕ. Акă Раççей ертӳçисем те пĕлтерĕшлĕ ку ыйту çине тимлĕх уйăрма пуçларĕç пулсан, вырăнсенче те çывăрса юлма юрамасть. Пуçарулăх кăтартма вара пур условисем те çитеççĕ. Малтанах 2-3 çул каялла Патшалăх Думи пĕчĕк тата вăтам бизнеса пулăшасси пирки кăларнă федераллă саккуна аса илер. Маларах çак ĕçе кӳлĕннисем пуçламăш утăмсене тунă та ĕнтĕ. Асăннă Федераллă саккун регионсенче бизнес-центрсем уçассине никĕслерĕ. Пирĕн республикăра та вăл икĕ çул каяллах хăй ĕçне пуçарчĕ. Акă черет районсене те çитрĕ.

**– Районта бизнес-инкубатор ĕçне пуçарса ярасси, эпĕ пĕлнĕ тăрăх, конкурс йĕркипе пулса иртрĕ пулас?**

– Çапла. Анчах кăçалхи сентябрĕн 4-мĕшĕнче «Муркаш пасарĕ» муниципаллă унитарлă предприяти ку конкурсра çĕнтерчĕ. Халĕ ĕнтĕ пирĕн çинче çĕнĕлĕхе туллин ĕçлеттерсе ярас яваплăх выртать. Пирĕн учредитель район администрацийĕ пулнăран унччченхи ял хуçалăх управленийĕнче пирĕн специалистсемпе хамăрпа ĕçлес текенсем валли ĕç пӳлĕмĕсем уçăлчĕç ĕнтĕ. Мĕн валли-ха ку компани, тейĕ вулакан. Ăнлантаратăп. Пирĕн тĕллев – ялсенчи ĕçчен те пултаруллă çамрăксене ял хуçалăх тĕлĕшпе предпринимательствăна кĕртсе ярасси. Ан тив, вĕсем те хăйсем туса илнĕ ӳсентăран тата выльăх-чĕрлĕх продукцине хăйсене тивĕçтерекен хаксемпе вырнаçтарма пултарччăр. Пирĕн ĕç вара – вĕсене пулăшасси. Пулăшас тĕллевпе бизнес-инкубаторăн пурăна киле чи малтанах çĕвĕ тата апатçимĕç тирпейлекен цехсем, продукцие реализацилес уйрăм, район çыннисен çĕнĕ шухăшĕсене шута илекен пай пулĕç. Çакна валли пирĕн хамăрăн бухгалтер, юрист тата ытти специалистсем пулĕç. Вĕсен пулăшăвĕпе продукци туса илекен ял çынни хăйĕн продукцине муниципаллă заказсемпе те вырнаçтарма пултарĕ, Шупашкарти магазинсенче хăйсен продукцине сутĕ. Кĕскен каласан, ял хуçалăх продукцине туса илессин интересĕ ӳсĕ. Тепĕр майлă каласан, пирĕнпе çыхăну тытакан ял çынни саккунпа чарман пур продукцие туса илсе сутассипе те ĕçлеме пултарать.

**– Çакă районшăн та, вырăнти бюджетсемшĕн те пысăк тĕкĕ пулмалла. Çапла вĕт?**

– Кунта хирĕçле хурав пулаймасть те. Пирĕн пĕтĕм тĕллев ял çыннине тулăхлă ĕçпе тивĕçтересси тата бюджетсене пуянрах тăвасси. Бюджет пуян пулсан социаллă ыйтусем те хăвăртрах татăлĕç.

**– Бизнес-инкубатор пулăшăвĕпе ĕç пуçаракан предпринимательсене эсир чи малтанах мĕнле пулăшу парайратăр?**

– Ку ыйту, ман шутпа, чи вырăнлăраххи. Пирĕн бизнес-инкубаторпа туслă çыхăну пуçарса яракансем хăйсем валли пирĕн патăмăрта хăтлă ĕç вырăнĕ илĕç, вĕсен аллинче хуласемпе çыхăнмалли телефон, хутсем упрамалли уйрăм шкаф, компьютер, сĕтел-пукан, район центрĕнчи юридицилле адрес, бухгалтер, организаци ĕçĕ-хĕлĕпе тата тавар вырнаçтарассипе консультацисем, ĕçре куллен кирлĕ нормативлă источниксем пулĕç. Кредитсем илме пулăшасси те кун йĕркинчен тухса ӳкмĕ.

**– Евгений Николаевич, эсир каланинчен бизнес-инкубаторта тин кăна ĕç пуçаракансем валли пур условисем те çителĕклĕ. Чăваш Республикин Президенчĕ çитес çула Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕ тесе палăртнăран эсир пуçаракан ĕç те пысăк пĕлтерĕшлĕн туйăнать. Çакна ăнланакансем ку çĕнĕлĕхрен çывăрса юлмаççех пулĕ тетĕп.**

– Эпĕ те çаплах шутлатăп. Çавăнпа пуçарулла, çĕнĕ шухăшсемпе пуян çамрăксене е аслăрах çулхисене те хамăрпа çывăх вăхăтрах çыхăнма сĕнетĕп. Пирĕн девиз: «Сирĕн хăвăр пурнăçлама вăй-хал çитереймен ырă шухăш пур пулсан, хăюллăнах пирĕн патăмăра килĕр!». Бизнес-инкубатор телефонĕсем: 2-23-45, 2-13-41, 8-919-667-03-87. Май килнипе хаçат вулавçисене пурсăра та Çĕнĕ çул ячĕпе саламлатăп. Кăçалхи çĕнĕ шухăшсене пурсăрăн та хăюллăнах пурнăçа кĕртмелле пултăр. Ку ĕçре вара эпир сире пулăшма яланах хатĕр.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

Официально

**Моргаушская территориальная избирательная комиссия**

**РЕШЕНИЕ**

**29 декабря 2008 года №51/1**

**О регистрации Перцева Юрия Викентьевича кандидатом депутаты Собрания депутатов Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики по одномандатному избирательному округу № 4**

В соответствии со статьей 24 Закона Чувашской Республики «О выборах в органы местного самоуправления в Чувашской Республике» Моргаушская территориальная избирательная комиссия **решила:**

1. Зарегистрировать Перцева Юрия Викентьевича, 1961 года рождения, проживающего в д. Тренькино Моргаушского района Чувашской Республики, агронома ООО «Хлебороб» Моргаушского района Чувашской Республики, выдвинутого Моргаушским местным отделением Всероссийской политической партии «Единая Россия», кандидатом в депутаты Собрания депутатов Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики по одномандатному избирательному округу № 4 29 декабря 2008 года, 10 часов 30 минут.
2. Выдать Перцеву Юрию Викентьевичу удостоверение о регистрации установленного образца.
3. Направить настоящее решение в газету «Çĕнтерӳ ялавĕ» для опубликования.

**Председатель территориальной избирательной комиссии А.В. АНДРЕЕВ.**
**Секретарь территориальной избирательной комиссии В.К. СОРОКИНА.**

Района йĕркеленĕренпе 65 çул çитнĕ май

# Тухăç пĕрремĕш вырăнтаччĕ

Муркаш ен ял хуçалăх районĕ пулнă май пирĕнтен пурсăмăра та тыр-пул тухăçĕ яланах шухăшлаттарнă, ăна ӳстерессипе çанă тавăрса ĕçлеттернĕ. Район йĕркеленнĕренпе 65 çул çитнĕ май вара уй-хирте ĕçлекенсен те аса илмелли сахал мар.

Эпĕ те Муркаш районĕнче 37 çул вăй хунăран, аса илмелли сахал мар тесе алла ручка тытрăм.

Чи асра юлни, чунра упраканни вара 1980 çулта «Сеятель» хуçалăх тырăпулă туса илессипе районта пĕрремĕш вырăна тухни. Вăл вăхăтра колхоза Владимир Михайлович Рубцов ертсе пыратчĕ. Шăпах вăл мана 1978 çулта тĕп агроном пулма сĕнчĕ, анчах сăмах май хăй иккĕленни пирки те систерчĕ. Эпĕ ăна пăшăрханма кирлĕ марри пирки, хам тăрăшасси çинчен пĕлтертĕм.

Мĕн тетĕр эсир? Тепĕр икĕ çултанах тырă-пулă туса илессипе районта 1-мĕш вырăн йышăнтăмăр. Председатель савăнать, эпĕ те хĕпĕртетĕп. Ара манăн 10 çулхи ĕç стажĕнче ку чи пысăк çитĕнӳ вĕт-ха!

Çитĕнӳ пирĕншĕн савăнăç та-ха, анчах вăл район ертӳçисен тĕллевне пăснă иккен. Тепĕр хуçалăхăн çав çул 5-мĕш хутчен 1-мĕш вырăна тухсан, «Ылтăн пучах» вымпел илмелле пулнă мĕн. Пире райĕçтăвком йышăнăвĕпе тырă-пулă тухăçне ампар виçипе кăтартма сĕнеççĕ. Эпир килĕшместпĕр. Председателе хăвăртрах командировкăна яраççĕ. Унăн вырăнне çумĕ юлнăччĕ. Вăл хайхи мана тата тĕп бухгалтера чĕнчĕ те статуправленине тырă-пулă тухăçне ампар виçипе кăтартмалла тесе района кайма машина пачĕ. Тĕп бухгалтера пичет те илме хушрĕ.

Райцентра çитсен эпĕ тӳрех ял хуçалăх управленине çул тытрăм. Ун чухне тĕп агроном Зоя Александровна Тимофееваччĕ. Вăл мана питĕ пулăшрĕ. Тав ăна. Паянхи кун та ырăпа асăнатăп.

– Николай Иванович, ĕмĕрте пĕрре мала тухатăр та, çак ӳсĕмрен хăвăр аллупа хăвăр писетĕр-и? – терĕ вăл ман çине ыйтуллăн пăхса. – Тепĕр тесен, ку вăл халăх ĕçĕ, унăн çитĕнĕвĕ вĕт-ха.

Статуправленинче те пирĕн «çĕнĕлĕхсене» йышăнмарĕç, «эсир кая юлнă» терĕç. Мана çакă çеç кирлĕ пулнă. Эпир тырă-пулă тухăçĕпе пĕрремĕш вырăнтах юлтăмăр.

Кайран, Ял-хуçалăх ĕçченĕсен кунĕнче, «Сеятель» хуçалăха асăнса илчĕç, анчах та ырлас вырăнне «вĕсен тырринче арпа нумай» тесе палăртрĕç.

Мĕн тăвас, пирĕн халăх уншăн кӳренмерĕ тата ĕçлес хастарлăха та чакармарĕ. Тепĕр çулне эпир тырă-пулă тухăçĕпе районта иккĕмĕш вырăнта пултăмăр. Ку ӳсĕм те пирĕншĕн пĕчĕк карт пулмарĕ. Çав çулхине районти ял хуçалăх управленийĕн ертӳçи уяв докладĕнче «Сеятель» пĕрлешӳллĕ хуçалăх юлашки çулсенче самаях курăмлă та палăрмалла ĕçлеме пуçларĕ тесе палăртрĕ.

Çапла ĕçленĕ эпир. Малашлăха пăхнă. Пĕри – пуриншĕн, пурте пĕриншĕн тăрăшнă.

Чăваш Республикин Президенчĕ 2009 çула Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕ тесе çирĕплетрĕ те çак вăхăтра Нискассисемпе Ярославкăсем çĕр ĕçĕнче аталанăвăн çĕнĕ утăмĕсене тăвасса, çĕнĕ çитĕнӳ картлашкисене çĕнессе шанса тăратăп. Çакна валли ку тăрăхра ĕçлекен халăх çителĕклех. Вĕсене пĕр тĕллевпе пĕр йыша пĕтĕçтермелле кăна. Çакна хуçалăхăн паянхи ертӳçисемпе специалисчĕсем ăнланса пурнăçласса кĕтетĕп. Ăна валли паян вăй илекен çĕнĕ технологисем хуçалăха килсен аван пулмалла. Çĕннине алла илсен фермăсем те пушă лармĕç, уй-хире те çум курăкĕ хупласа илеймĕ. Район 65 çул тултарни «Сеятель» ял хуçалăх производство кооперативĕн ĕçченĕсемшĕн асра юлмалли çулталăк пултăр!

**Н. ПЕТРОВ.**

Нискасси ялĕ.

Выльăх пăхакансен пĕрлехи кунĕнчен

# «Ăнăçу чикки пĕр вырăнта ан юлтăр», –

терĕ кĕске калаçура «Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕн Патаккассинчи сĕт ферминче пăру пăхакан Лена Германовна Колбасова. Ĕçлекен çапла калать пулсан – вăл хăйĕн ĕçне аван пĕлет. Нумай çул 6 уйăхченхи пăрусене пăхнă çĕрте тимлекен хĕрарăм, хăйне çирĕплетсе панă ĕç вырăнĕнче пĕчченех вăй хурать пулсан та, пуçне усмасть. Кăçал вăл пăхакан пăрусем ытти çулхисенчен палăрмаллах лайăх ӳт хушнă: талăксерен вăтамран 800 грамм ытла.

Ял хуçалăх производство кооперативĕсенчи обществăлла выльăх-чĕрлĕх пăхакансен черетлĕ пĕрлехи кунĕ раштав уйăхĕн 24-мĕшĕнче иртрĕ. Çак кун район администрацийĕн яваплă ĕçченĕсем районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен выльăх-чĕрлĕх фермисенче пулса унта ĕçлекенсемпе тĕл пулса калаçрĕç. Район администрацийĕн йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕçтерессин тата вырăнти самоуправлени органĕсемпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ Л. Тарасова ертсе пыракан ушкăн çак кун «Оринино», «Восток» ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе «Рассвет» агрофирмăра пулса çак хуçалăхсенчи выльăх-чĕрлĕх отраслĕ епле хĕл каçнипе паллашрĕ. Йĕркеленнĕ ушкăнра (район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ Г. Павлов, ял хуçалăх пайĕн тĕп специалист-эксперчĕ Т. Алексеева) çак йĕркесен авторĕн те пулма тӳр килчĕ. Мĕн куç умне тухрĕ-ха асăннă çул çӳревре?

Асăннă кун эпир çитсе курнă хуçалăхсенче, «Рассвет» агрофирмăсăр пуçне, обществăлла выльăх-чĕрлĕх пысăк çухатусемсĕрех хĕл каçасси иккĕлентермерĕ. Акă «Оринино» хуçалăхра ĕнесем паян 11,7 килограмм сĕт антараççĕ. Вĕсен йышĕ унчченхи çулхисенчен чакман: 205 пуç.

– Ĕне сĕчĕ чĕлхи çинче тенине асра тытса выльăхсене тулăх тăрантарассине самантлăха та кун йĕркинчен кăлармастпăр. Сумалли ĕнесен рационĕнче паян 4-4,5 кг концентрат, 1кг вăрă чусти (жмых), 12 кг силос, 6 кг утă, 7-8 кг выльăх кăшманĕ, улăм çителĕклĕ. Ĕне сăвакансем икĕ сменăпа саккăрăн ĕçлеççĕ. Малта пыракансем: Галина Ковалевапа Зоя Васильева дояркăсем. Вĕсем хăйсен ушкăнĕнчи кашни ĕне пуçне 11 уйăхра 4,5 пин килограмм сĕт сума мехел çитерчĕç. Çулталăк кăтартăвĕ те вĕсен сумлă пуласси пирки иккĕленӳ çук, – каласа пачĕ фермăри выльăхсен йышĕ каталманнине уйрăммăн палăртса чылай çул çак фермăна ертсе пыракан Раиса Ананьевна Блинова.

Ĕç çине алă сулмасан ӳсĕмсем пулаççех. Çакна Орининти сысна ферминче пулсан та асăрхарăмăр.

– Ыррине шанатпăр, çавăншăн тăрăшатпăр. Сыснасене тăрантарас ĕçре типĕлле тăрантармалли çĕнĕ технологие çирĕп алла илтĕмĕр. Апат çитет. Кунпа пĕрлех тирпейлĕх пирки те самантлăха та манмастпăр, – каласа парать таса сарайсемпе иртнĕ май ферма заведующийĕ Эльвира Геннадьевна Ботникова.

Сарайсемпе витесенчи тирпейлĕх «Восток» хуçалăх фермисене çитсессĕн те айккинче юлмарĕ. Икĕ хуçалăхра та хĕл кунĕсене пăхмасăрах юсав ĕçĕсем пирки те манса кайман.

«Оринино» хуçалăхăн Патаккассинчи сĕт ферминче ĕçлекен юсавçăсен бригади виçĕ водительрен тăрать. Вĕсем: С. Иванов, Н. Волков, В. Бычков. Вĕсен тăрăшулăхĕпе пĕркуннерех Орининти сысна ферминче юсав ĕçĕсене вĕçленĕ, халĕ пăру сарайĕнче юсав ĕçĕсем пыраççĕ тата Атапайĕнчи сысна ферми валли урайсем сарма хăмасем хатĕрлеççĕ.

Çакнашкал мал туртăмлă ӳкерчĕк «Рассвет» агрофирмăна çитсен курăнсах каймарĕ. Кунти фермăсенче санитари лару-тăрăвĕ питех те начар. Кунпа пĕрлех апат-çимĕç ыйтăвĕ те çутă малашлăхах шантармасть. Сарайсенчен тислĕк вăхăтра тухманни те пĕтĕмĕшле ĕç çине тӳрккессĕн пăхтарать. «Рассвет» агрофирмăра та, «Передовик» хуçалăхра та сарайсемпе витесенче выльăхсен йышĕ сахаллипе шыв пăрăхĕсем шăннă тĕслĕхсем пулма та ĕлкĕрнĕ. Ку çулпах кайсан шартлама сивĕсем пуçлансан...

Обществăлла выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма пуçланăранпа малтанхи виçĕ уйăх хыçа юлчĕ те ĕнтĕ. Пĕтĕмĕшле илсен кăçал çĕр ĕçченĕ условнăй пĕр выльăх пуçне пĕлтĕрхинчен 3,2 центнер апат единици выльăх апачĕ ытларах хатĕрленĕ: 19,1 центнер апат единици. Çак кăтартăва 28 центнертан ирттернĕ хуçалăхсем: Е. Андреев яч. хис., «Восток», «Герой», «Лидер», Суворов яч. хис., Чкалов яч. хис., «Ударник».

Хĕлĕн малтанхи икĕ уйăхĕнче хуçалăхсем пурĕ 335,1 тонна аш-какай (пĕлтĕрхин 67,5 проценчĕ), 1148,4 тонна сĕт (пĕлтĕрхин 91 проценчĕ) туса илнĕ. Пĕр ĕне пуçне тивекен вăтам сăвăм 494 килогрампа танлашнă, пĕлтĕрхинчен 50 килограмм ытларах.

«Ударник» хуçалăхри Йӳçкассинчи сĕт ферминче 100 пуç сумалли ĕне валли çĕнĕ пӳлĕм хута янă, «Свобода» хуçалăхра çĕнĕ технологипе усрама çĕнĕ сысна вити хута яма хатĕрлесе çитернĕ.

**А. ПЕТРОВ.**